Çыруллă тĕрĕ

Чăваш тĕрри çыруллă теççĕ.

Мĕн çырнă-ши вара унта?

Чăваш тĕрри асамлă теççĕ.

Асамĕ пур-тăр çав, чăн та.

Чăвашăн çĕр-пин тĕрĕ теççĕ.

Çĕршер-пиншер çул упранса

Аваллăх йĕрĕсем çитеççĕ

Таса пир çийĕн çырăнса.

Чăваш тĕрри  - чăваш тĕнчи,

Чăваш кун-çулĕ, унăн терчĕ...

Кашни çĕввин хăйĕн чĕлхи,

Вăрттăнлăхне вула пĕлесчĕ.

Сысна ури те хур карти,

Автанĕ те, таки те вырăн тупнă.

Хĕвел те çăлтăр, вут та çĕр

Шур пир çинчи тĕрре вырнаçнă.

Чĕр чун тĕнчи çак тĕрĕре,

Е йывăç-курăк ешерет,

Е кайăкĕ вĕçсе иртет -

Чăваш йăлтах тĕрре кĕртет.

Ав çăлтăрĕ те çутатать,

Сап-сар хĕвел йăлтăртатать.

Шыв çийĕ лăпкăн хумханать -

## ***Апла пулсан чăваш пурнать***

*Чĕнтĕр, хантăс, ăсма хантăс,*
*Кукăр-макăр, чăрмалла...*
*Çĕвĕсем шутланă харăс*
*Хĕрĕсем ăмăртмалла.*

*Çак ăсталăха вĕреннĕ*
*Хĕрĕсем мĕн ачаран,*
*Тĕрĕ чĕлхине вуланă*
*Пир çине куçарнă май.*

*Несĕлсен тарăн тымарĕ*
*Упранать тĕрĕсенче,*
*Малашне те тĕлĕнтерĕ*
*Пир çинчи паллисемпе.*

*Тĕрĕ çырăвĕ асамлă*
*Пулнă çапла авалах.*
*Чăваш ячĕ те илемлĕ*
*Тĕрĕре пурăнтăрах.*

Алина Петрова,
Элĕк районĕн
Чăваш Сурăм шкулĕ